# ОГИНСКИЙ ПОЛОНЕЗĔ

1. Пит тунсăх–çке!
Халь астăватни эсĕ:
Ман çырă çӳçĕме ачашласа,
Каларăн те кулса, те ырласа:
«Эс каччă мар —
Огинский полонезĕ».

Сăвви Василий САМОЙЛОВĂН.

Кĕвви Анисим АСЛАМАСĂН.

2. Пит тунсăх–çке! Халь кунта çук
çав эсĕ,
Тен, çавăнпах пĕрмай ман хăлхара,
Чун–чĕрере ир–каçăн янăрать
Ытарайми Огинский полонезĕ.

3. Пит тунсăх–çке! Ăçта–ши халĕ эсĕ:
Е мăшăрлă, е ман пекех пĕччен!
Куç хупаймастăп эпĕ мĕн ирччен,
Мана йĕртет Огинский полонезĕ.

4. Пит тунсăх–çке! Кĕтетĕп,
таврăн эсĕ!
Каллех ман çӳçĕме ачашласа,
Кала е шӳтлесе, е ырласа:
«Эс каччă мар —
Огинский полонезĕ».

